К84.89(=Чув)
Н56
Ч-40616



Зоя НЕСТЕРОВА

# Юмахсем



Национальная библиотека ЧР
4-040616

Эпĕ тĕп хуламăрти 1-мĕш номерлĕ гимназире чăваш чĕлхи вĕрентетĕп, ачасене чылай çул ăс паратăп.

Акă ман аллăмра – Зоя Алексеевна Нестерова çыравçăн кĕске калавĕсем. Вĕсене тĕрлĕ ÿсĕмри вĕренекенсем вулама пултараççĕ, çыравçăн сăнарлă, яка чĕлхипе çырнă калавĕсем питĕ кăсăклă, ачасене чунлă, ăш-пиллĕ тунинчен ырри мĕн пултăр-ха пурнăçра. Зоя Алексеевна çаксене йăлтах шута илнĕ.

Хальхи 4-мĕш класс кĕнекинчи «Пахчара»
юмаха … ĕ, ăна
Зоя … пĕлет,
тавра… култа
ĕмĕр… к, вăл
çÿп-ç… -чăн
çырав… çын.

Эпĕ… есене
килĕш… ÿссе
çитĕн… çĕ.

Кĕн… сене
пичетл… чăр-
киленч… ллă.

*…А сăвăç.*

Зоя НЕСТЕРОВА

# Юмахсем

Шупашкар 2006

УДК 821.512.111 - 93
ББК 84(2Рос=Чув) 6-4
Н-56

Нестерова З. А.
Н – 56 Сказки (Юмахсем) Чебоксары, Частная типография Шафровой Г. К. – 2006г. 24 с.

И-40616
Национальная библиотека Чувашской Республики

ПРОВЕРЕНО
29/10

С Нестерова З. А.

# КИЛ ХУРАЛÇИ

Упле умĕнче пуçне малти урисем çине хурса пысăк йытă выртать, килкартинче чупкаласа çӳрекен пĕчĕк чĕпсене хураллать. Акă çывăхри сарай çине хура курак пырса ларчĕ.

– Карр! Карр! Кампур! Пахча хыçĕнче ту-ут-лă шăмă выртать. Кайса ил, – карклатрĕ вăл.

– Мана кайма юрамасть. Эпĕ кил-çурт хураллатăп, – терĕ йытти пуçне çĕклемесĕр.

– Карр! Карр! – карклатрĕ каллех курак сарай çийĕн сиккелесе. – Ял хыçĕнче йытăсем çуллă какай пайлаççĕ. Сан валли те хăварнă. Кайса ил.



– Мана кайма юрамасть, эпĕ кил-çурт хураллатăп, – терĕ каллех йытă.

Хура курак çывăхах, сарай хĕрринех пырса ларчĕ.

– Кампурр! Пăх-ха, курр! Кашкăр килет!

– Ăçта? – сиксе тăрса вăртах пуçне пăрчĕ йытă.

Çакна кĕтнĕ курак тӳрех чĕпсем патне вирхĕнсе анчĕ.

– Хам! – сикрĕ çавăнтах кил хуралçи чее ултавçă çине. Кăшт çеç инкеке лекетчĕ çăткăн вăрă хурах. Аран вĕçсе çĕкленме ĕлкĕрчĕ.

# ПАХЧАРА

Кĕр енне хĕр ача пахчана çырла тĕмĕ лартрĕ. Кунсем кĕскелсе пычĕç, хĕвел ăшшине çителĕклĕ пами пулчĕ. Шăннă çĕр çине шурă юр пĕрчисем вĕлтĕртетсе анма пуçларĕç.

– Ай-яй, сивĕ. Шăнса вилетпĕр эпир капла, – шухăшларĕ çырла курăкĕ.

– Манран ан хăра, – терĕ шурă юр унăн симĕс çулçийĕсене тĕплĕн хупласа. – Капла сана Хĕл Мучи те тивеймест, аскăн çил те ласкаймасть. Çывăр, ан кулян.

Çапла хаяр хĕл иртсе кайрĕ. Çырла тĕмĕ хĕвел ăшшине туйса вăранчĕ.

– У-у, çуркунне çитнĕ-çке, – терĕ вăл пуçне çĕр çинчен çĕклесе. – Халĕ хăвăртрах ӳсес те ачасене т утлă çырлапа савăнтарас.

Пăхать хайхи пĕчĕк тĕм – ун йĕри-тавра темĕн чухлĕ çум курăкĕ шăтса ларнă. Вĕсем ытла та васкаса ӳсме тытăнчĕç.

– Пуçтар çулçусене! Мĕн сарăлса ларатăн? Эсĕ çеç мар кунта, – терĕ пиçен шĕвĕр йĕппипе пархатарлă курăка тирсе илсе.

– Эсир йăнăшатăр, – сăпайлăн хирĕçлерĕ ăна çырла тĕмĕ. – Ку ман вырăн. Çакăнта ӳсме мана хĕр ача кĕркуннех лартса хăварчĕ.

– Ха, лартса хăварнă ăна, – çиллессĕн мăкăртатрĕ шурут çирĕп тымарĕсене пур еннелле те тăсса. – Пĕччен мĕн чухлĕ Вырăн йышăнать.

– Эх, епле ачашласа ӳстереççĕ Хăшĕ-пĕрисене... Пире акмаççĕ те, лартмаççĕ те. Хамăра хамăр упрамасан, тахçанах пĕтмелле, – терĕ мăян çырла курăкĕнчен хĕвел çутине хупăрлама тăрăшса.

– Мĕншĕн çаплах ӳпкелешетĕр? – тĕлĕнчĕ çырла курăкĕ. – Эпĕ пĕр усăсăр вырăн йышăнмастăп-çке. Манăн ачасем валли тутлă çимĕç ӳстермелле. – Вăл йĕри-тавра ларакан тем тĕрлĕ çумкурăкĕ çине пăхса илчĕ. – Эсир хăвăр мĕн тĕллевпе пурăнатăр? Çынсене мĕнпе пулăшас тетĕр?

Çак калаçăва илтнĕ йытпырши, çĕр çийĕн çĕлен евĕр шуса çырла тĕмĕ патнелле çывхарчĕ.

– Ман тĕллев сана çыхса хурасси, – çапла каларĕ ырă курăка явалаcа та илчĕ.

– Чипертерех пуплеш-ха, йытпырши, – илтĕнчĕ çемçе ачаш сасă. – Юрать-и тараватлă кӳрше çапла хăратма. Ан тив, вăл та пурăнтăр, – кăна çинçешке туналлă лачака курăкĕ каларĕ. – Эсĕ, ырă кӳршĕм, манран ан шиклен. Мана вырăн нумай кирлĕ мар. Эпĕ чăрмантармастăп, çĕр çийĕн тăсăлса выртатăп çеç. Çулçăмсем те вĕтĕ, манăн хĕвел çутине хупăрлас çук.

Сисмерĕ те пархатарлă çырла тĕмĕ, ăна пур енчен те тĕрлĕ сĕмсĕр çум курăкĕ хупласа илчĕ. Йытпыршийĕ кунран кун ытларах та ытларах пăвать; пиçен йĕпписем вĕçĕмсĕр тирсе ыраттараççĕ, лачака курăкĕн вĕтĕркке çулçисем йĕри-тавра сарăлса кайрĕç, унтан çӳлелле кармашма пуçларĕç; шур ут хунав хыççăн хунав кăларать. "Пĕтере ççĕ кусем мана. Хĕвел çутине те кураймастăп. Çĕрти нӳрĕке те пĕтĕмпех вĕсем ĕмсе

илеççĕ", – шухăшларĕ çырла курăкĕ.

Телее, кĕçех пахчана хĕр ача пырса тухрĕ.

– Ай-уй! – ик аллине шарт çапрĕ вăл çумкурăкĕ айне пулнă çырла тĕмне асăрхаса. Пĕчĕк кĕреçе тытрĕ те пуçларĕ усал харампырсене тăпăлтарма, кăкла-кăкла сирпĕнтерме. Çырла тĕмĕ çăмăллăн сывласа ячĕ, хĕвеле курса симĕс çулçисене ирĕклĕн хаваслăн саркаларĕ.

– Тавтапуç! – пăшăлтатарĕ вăл.

– Çăлăнтăм тетĕн-и пирĕнтен? – юнарĕ ăна çĕрте татăлса юлнă пĕчĕк лачака курăкĕ. – Савăнма иртерех-ха. Пире пĕтерес тесен пайтах тапаланас пулать. Хĕр ачасене малашне те çапла хутран-ситрен çеç ас илсен, пурĕпĕр кунта эпир хуçа пулатпăр, пурĕпĕр тутлă çимĕç туса савăнма памастпăр.

Эсир мĕнле шухăшлатăр, ачасем? Хĕр ача ырă çырла тĕмне çумкурăкран тасатса тăма та манĕ-ши вара?

# КИШĔР–МИШĔР

Йăран çинче кишĕр ӳснĕ.

– Йăлăхтарчĕ пĕр вырăнта ларса. Кайса çӳрем-ха. Кӳрше кĕрсе тухам, – шухăшларĕ вăл. Таплаттарчĕ вара хăй çулĕпе. Хирĕç мулкач сиккелесе пырать.

– Эй-ей! Мĕнле тутлă апат киллет, – савăнчĕ Чалăш куç. – Кишĕр-Мишĕр, ăçталла çул тытрăн? – ыйтать вăл çывăхах пырса.



– Купăста инке патне хăнана каятăп-ха.

– Купăста патне? – пушшех хĕпĕртесе ялтах сикрĕ мулкач. – Мĕн чухлĕ апат пулать!

– Кишĕр-Мишĕр ман та пĕрле илсе кайха, – ыйтать вăл.

– Атя, кайăпăр, – килĕшет кишĕрĕ.

Утаççĕ хайхисем. Кӳршĕ пахчара Палкан ятлă йытă пурăннă. Мулкач çывхарнине туять те çакă, тытăнать вĕрме

– Хам! Хам!

– Ах, Кишĕр-Мишĕр! – тăпах чарăнать мулкач. – Вăхăт çук манăн хăнасем тăрăх çӳреме. Тепре куриччен! – вăртах çаврăнать те вăрманалла тапса сикет.

# ÇĂЛТĂМĂР!

Пилĕк çулхи Аньăпа Лариса выляса-кулса урамран картишне кĕчĕç. Кĕçех крыльца çинче Аня асламăшĕ курăнчĕ. Аллинче йăрăм çурăмлă хĕрлĕ кушак çури.

– Ме, тыт, – тăсса пачĕ вăл ăна Аньăна. – Çырмана, шыва кайса ярăр.

Нимĕн те шухăшламасăр, çаплах савăнса кулса хĕрачасем анкартине тухрĕç, çырма еннелле утрĕç. Мĕн шухăшламалла... Аслисене итлес пулать. Мĕн тумаллине вĕсем пурне те пĕлеççĕ. Карта урлă каçрĕç. Акă вăл тарăн çырма. Çеремлĕ хĕррисенче çĕнĕ симĕс курăк шăтма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Çанталăкĕ лайăх, ăшă. Хĕвел хĕртсе пăхать. Пурçăн пек йăлкăшакан кăвак тӳпере пĕр пĕлĕт татăкĕ те курăнмасть.

Чăнкă çыранран икĕ хĕрача асăрханса анчĕç, шыв хĕррине пырса тăчĕç. Унта пăтранчăк çурхи шыв хуллен шавласаваскаса юхать. Нихăçан та типмест вăл, анчах çулла шывĕ нумай мар. Тăп-тăрăскер, хуллен, кăмăллăн шăнкăртатса чупать. Чăх та ут са каçмалла. Халĕ ирĕлнĕ юр шывĕпе вăйланнăскер, вăл тарăн, унта кĕме юрамасть сĕтĕрсе кайма пултарать. Юр та пĕтĕмпех кайса пĕтмен-ха. Унта-кунта çырма кукрисенче шурă саплăксем пек курăнса выртать.

Аня шыв çывăхнех пычĕ те кăштах малалла ӳпĕнсе аллине вĕçертрĕ. Шыв юхăмĕ пĕчĕк кушака самантрах çавăрса тытрĕ, шала-шала илсе кайрĕ.

– Мяу! Мяу! – кăшкăрса ячĕ мĕскĕн чăмакка. Пĕлĕт тĕслĕ кăвак куçĕсем хăраса чарăлнă. Вăл хĕрачасем çине пăхать, тилмĕрет, чĕнет, çăлма тархаслать. Васкавлă шыв хумĕ ăна е çӳлелле çĕклет, е аялалла ывăтать.

– Мяу! Мяу-у!

Такам хыçран тĕртнĕ пек хĕрачасем сасартăк хускалчĕç, иккĕшĕ те пĕр харăсах кăшкăрса йĕрсе ячĕç те сивĕ шыва сирпĕнсе кĕчĕç. Маларах тăракан Лариса аллине тăсрĕ, çăмламас йĕпе чăмăрккана ярса тытса икĕ аллипе те хăй çумне çупăрларĕ, çырана сирпĕнсе тухрĕ.

– Ах, мĕскен, мĕскĕн... Шеремет...

Халĕ мĕн тумалла ĕнтĕ, тăна кĕчĕç хĕрачасем. Каялла илсе каяс – асанне ятлама тытăнать. Кунта хăварас, пурĕпĕр таврăнать вăл. Йĕри-тавра пăхса илчĕç – инçе те мар ӳпĕнтерне

валашка выртать. Пĕр-пĕр хĕрарăм килти ăпăр-тапăра чÿхеме илсе килнĕ ĕнтĕ. Лариса пĕр хĕрринчен çĕклесе уçса пăхрĕ, пушах.

– Ак çакăнта, – терĕ вăл.

Чĕтрекен кушак çурине вĕсем валашка айне пытарчĕç. Вара каллех тем çинчен хаваслăн пакăлтатса килнелле утрĕç.

Хĕвел каç еннелле сулăнсан Лариса каллех кушак çурине аса илчĕ. Мĕнле-ши вăл унта? Хырăмĕ выçрĕ пулĕ. Холодильникрен колбаса кăларса кас са илчĕ, хутпа чĕркесе урама тухрĕ. Аня та кунтах.

– Атя кушак çурине кайса пăрахатпăр.

– Атя.

Сиккипех вĕçтерчĕç. Чупса çитрĕç. Валашка вырăнтах – анчах кушак çури çук. Ăçта вăл? Тухса тарма пултарайман.

– Тахăшĕ илсе кайрĕ-ши? – темшĕн пăшăлтатса ыйтрĕ Аня.

– Аха... Çапла. Илсе кайнă, илсе кайнă, – аллинне çупса хаваслăн сиккелесе илчĕ Лариса. Ай, савăнăç! Эпир çăлтăмăр! Çăлтăмăр!

# АТУСЬПА МАРУÇ

*Калав*

Пĕр çуллахи кун Аркашпа Анюта килне ашшĕн шăллĕ Хветĕр пиччĕшĕ пычĕ. Пĕччен мар, йытăпа. Йытти пысăк, хĕрлĕ тĕслĕ. Ашшĕ картишĕнче вутă çуратчĕ. Тăванне курсан вăл пурттине каска çине тĕрĕнтерчĕ те хирĕç утрĕ. Пÿрте кĕмесĕр вĕсем сулхăна крыльца çине ларчĕç. Йытти хуçин ури патне тăсăлса выртрĕ. Пилĕк çулхи Аркашпа виçĕ çулхи Анюта, çывăха пыма шикленсе, ун çине аякран пăхса тăчĕç.

– Ну-кă, килĕр-ха кунт а, – чĕнчĕ вĕсене ашшĕ.

– Килĕр, килĕр, ан хăрăр. Сире тивмест вăл, – терĕ Хветĕр пиччĕшĕ те йытти çине кăтартса.

Ачасем хăюсăррăн çывхарчĕç.

– Ну, Атюсь, паллаш. Малашне пĕрле выляма тивет сире, – терĕ Хветĕр пиччĕшĕ йыттине.

Лешĕ юлхавлăн çĕкленчĕ те Аркашăн хăй енне хăра-хăрах тăснă алă тупанĕ çине малти урине хучĕ. Анюта ашшĕ хыçне пытанса йĕрсе ячĕ.

– Ну-ну, – аллисем çине çĕклерĕ ăна ашшĕ. – Атусь – лайăх

йытă. Анютăна юрататъ вăл.

Çав самантра, пахча алăкĕ айĕнчен хĕсĕнсе, картишне ула çурăмлă Марусь кушак кĕчĕ те васкамасăр кĕлет еннелле утрĕ.

– Хр-р-р! – картах туртăнчĕ йытă. Ачасем сывласа илме те, куç хупма та ĕлкĕреймесĕр, тӳрех кушак енне сирпĕнчĕ. Марусь вара... Хăранипе тапса сикрĕ тетĕр-и ăна? Çук. Йытă енне вăрт çаврăнчĕ те, хăрушшăн чăшлатса, вăйлă тăшманне пĕррех питĕнчен янлаттарса ячĕ. Атусь каялла сикрĕ. Маруçĕ вара нимĕн пулман пекех çаврăнчĕ те васкамасăр хăй çулĕпе уттарчĕ. Намăсланнă йытă, çынсем умĕнче ятне ярас килмерĕ пулĕ çав, хаяррăн хăрлашса каллех кушак енне талпăнчĕ. Маруç пуçне пĕкрĕ, çурăмне пĕкĕ пек аврĕ. Хаяррăн ялкăшакан куçне йытă çине тĕллерĕ те, çивĕч шăлĕсене йĕрсе иккĕмĕш хут чăшлатса ячĕ.

– Х-х-х!

Кушаксен сехрине хăптарма хăнăхнă пысăк вăйлă Атусь, ним тума аптраса, пĕр вырăнта тапăртатса илчĕ. Вара пуçне чикрĕ те аяккалла пăрăнса утрĕ.

– Ну, куш-ак! – тĕлĕннипе пуçне сулкаларĕ Хветĕр пичче. – Ну, маттур! Курман эпĕ халиччен кунашкал кушак. Эй, Атусь, кил-ха кунта! Мĕн пуçна пăратăн? Намăс-и куçран пăхма? Ай-яй-яй!

Савăннă Аркаш алă çупса ячĕ. Анюта тăчĕ те хавасланнă пит-куçпа пĕчĕк тусĕ хыççăн пӳрте кĕрсе кайрĕ. Ачасен ашшĕ те усси айĕн кăмăллăн кулса илчĕ.

– Ăслă йытă, – терĕ хуçи айăплăрах сасăпа. – Пурне те ăнланать, хушнине пĕтĕмпех итлет. Пĕр çитменлĕх пур – кушака юратмасть. Курать çеç – хуть мĕнле кăшкăр, хуть мĕн ту... Ну... Маруç пирки ан шикленĕр... Тивмест вăл ăна, тек пымасть ун патне...

Виçĕ эрне – Хветĕр пиччĕшĕпе инкĕшĕ курортран таврăниччен – пурăнчĕ Атусь Аркашпа Анюта патĕнче. Кушакшăн пулсан – те пур вĕсен килĕнче çак чăрсăр йытă, те çук – çаврăнса та пăхмасть. Çӳрет хăйне кирлĕ пек. Йытти вара – намăса тӳсеймесĕр-ши, Маруçа картишĕнче курсанах, ӳплене пытанать, выртать вара çывăрнă пек пулса, кури куçа курмăш туса.

Вăт çавăн пек Аркашпа Анютăн Марусь ятлă кушакĕ.

# АВТАТТИ КУНĔ

Автатти кунĕ автан ĕçмелĕх шыв курăнсан пахча çимĕç ăнса пулать", – теççĕ. Çапла, çĕр ĕçĕпе пурăннă çын сĕм авалтан Автатти кунне – хальхи календарьпе пуш уйăхĕн вун тăватттăмĕшне – ас туса пурăннă. Мĕншĕн-ши? Мĕншĕн тесен пуш уйăхĕн вун тăваттăмĕшĕнче сивĕ хĕлпе ăшă çур вăй виçме тытăçăва тухаççĕ имĕш. Хăшĕ çĕнтерет – çуллахи çанталăк мĕнле пуласси çавăнтан килет-мĕн.

Ку юмаха мана тахçан асатте каласа панăччĕ. Асатте хăйĕн аслашшĕнчен илтнĕ-и тен. Акă мĕнле пулса иртнĕ çав тытăçу пĕр çул.

Сивĕ Мучи хăйĕн пăр керменне таврăнчĕ те юртан тунă шапшурă кăпка вырăнĕ çине лаплатрĕ, канăçсăррăн çавăрăнкаларĕ, йывăррăн сывла-сывла ячĕ. Хĕвел канăç памасть ăна. Хаяр хĕл ларсан хăйĕн ăшă пайăркисене çĕр çине яма чаръннăччĕ-ха вăл. Халĕ акă Çутă Çуркунне çывхарать. Çавнна пула пачах итлеми пулчĕ Сивĕ Мучие сар ă Хĕвел. Иртерех тăрать, каярах анса ларать. Кăвак тӳпене çӳлерен çӳлерех хăпарать. Çутă пайăркисене кăна мар, ăшшине те çĕр çине кунран кун ытларах та ытларах ăсатма тытăнчĕ. Кăпка юр сивĕ Мучи юратнă шурă тĕсне çухатрĕ ĕнтĕ, тĕксĕмленсе çӳхелсех пырать. Вырăнăн-вырăнăн ăшша тӳсеймесĕр йĕрсе ярать те, шыв кӳлленчĕкĕсем хăварса пачах çухалать. Анчах Сивĕ Мучи парăнасшăн мар-ха. Ир-каç, Хĕвел инçетри çĕрсем хыçĕнче каннă чух, вăл каллех хăйне вăйлăн туять, яланхи пекех хуçаланма пăхать. Хавшанă юра шăнтса хытарать, çĕнĕрен сапса шуратать, шыв кӳлленчĕкĕсене пăрлантарать, çаралнă йывăç турачĕсене шурă пас пĕрчисемпе хупăрлать, е асар-писер çил кăларса ярать. Кăвак тӳпене хупăрласа вĕçет, ахăрашать, пĕтĕрĕнет вара лешĕ. Тепĕр чух, хĕллехи пекех, урамсенче юр кĕрчĕсем хыва-хыва лартать. Анчах темле тăрăшсан таа усси сахал çав. Пĕрре те хăрамасть Сивĕ Мучирен çутă питлĕ Çуркунне, хăвалать ăна çурçĕрелле. Каяс килмест шурă сухаллă Сивĕн темиçе уйăх хуçаланнă вырăнсенчен, тăнчă-тăнчă ывăнать вăл ăшăпа кĕрешсе. Паян акă тӳсеймерĕ, кăштах канам-ха тесе пĕр керменне таврăнчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, вичкĕн çил вăркăшса кĕчĕ.

– Сивĕ Мучи! Тăр-ха, тăр, – терĕ вăл. – Эсĕ, мĕн, мантăн-им

ыран мĕнле кунне?

– Мĕнле кун? – куçне уçрĕ лешĕ.

– Ыран Автатти кунĕ, – пĕлтерчĕ çил.

Çакна илтсен Çурçĕр хуçи ялтах тăрса ларчĕ.

– Ай-яй-яй! Çывăрса юлаттăм вĕт, – шухăшларĕ вăл.

Вăр-вар тумланчĕ: йăлтăр-йăлтăр кĕрĕкне тăхăнчĕ, шап-шурă çĕлĕкне пуçĕ çине пусса лартрĕ, пăр туйине илчĕ те керменĕнчен тухрĕ.

– Эй, сивĕ ачисем! Пысăккисем, пĕчĕккисем! Пурте кунта, ман пата пухăнăр! – чĕнсе илч ĕ вăл хăйĕн çарне. – Ыран Автатти кунĕ! Пĕлетĕр-и эсир çакна?

– Пĕлетпĕр! – илтĕнчĕç сасăсем.

– Ас тăвăр, хытă тăрăр. Пĕр ăшă пайăрка та çĕр çине ан ӳктĕр. Вара эпир çу кунĕсене те хамăра пăхăнтаратпăр.

– Çĕнтеретпĕр! Çĕнтеретпĕр! – каллех янраса кайрĕç мухтанчăклă сасăсем.

Ĕнтĕ каç пулчĕ, ялкăш хĕвел çĕр хыçне канма кайрĕ. Сивĕ Мучие çакă çеç кирлĕ. Вăл хулпуççине маттуррăн выляткаласа илчĕ те ĕçе тытăнчĕ. Чи малтан тавралăха çăра тĕтре карса илчĕ. Унтан тĕксĕм йывăç турачĕсем пасарса шуралчĕç. Уйăх çутинче тĕрлĕ тĕспе ялтăртатса çунма тытăнчĕç. Унтан Сивĕ Мучи чӳречесем çине вĕрчĕ, вара вĕсем çӳлтенех шурă ӳкерчĕксемпе тĕрленсе хупланчĕç. Пĕчĕк шыв кӳлленчĕкĕсем шăнса чул пек хытса ларчĕç. Ваксем çутă пăрпа витĕнчĕç. Çулсем пăрлакланчĕç.

Шыв тĕпĕнче çывăракан пулă вăранчĕ те, çуркунне килчĕ-ши тесе çӳлелле çĕкленчĕ, анчах Сивĕ Мучие курса хăвăртрах каялла чăмрĕ, кайăк-кĕшĕк йăвине кĕрсе пытанчĕ. Выльăх-чĕрлĕхе çынсем ăшă витесене хупрĕç, пӳртсенче вутă хутса ячĕç.

– А-а, хăратăр-и? Кăтартăп эпĕ сире çуркунне кĕтме! – шарт çапрĕ савăннă Сивĕ Мучи пăр туйипе. Акă вăл ялтан яла, хуларан хулана çӳрет, туйипе е пӳрт пĕренисене шаккать, е çĕре çапса шартлаттарать.

– Илтетĕн-и, Çуркунне, епле хăватлă эпĕ?

Çĕрĕпе хуçаланчĕ юр сухаллă Мучи, çĕрĕпе хăй вăйĕпе мухтанчĕ.

Çуркуннен ĕçĕ мăй таранах. Çак кунсенчен кăнтăр енчен хура курак вĕççе килмелле. Ăна кĕтсе илес пулать, ан шăнтăр тесе сивĕ çанталăка кăшт та пулин йăвашлатас пулать. Ăшă енне

вĕçсе кайнă ытти кайăк-кĕшĕк те тăван çĕршыва таврăнасшăн хыпкаланать. Йăва çавăрса чĕпсем кăларас пулать, Кăнтăрти çилпе калаçса татăлмалла. Час-часах вĕртĕр ку еннелле. Хальлĕхе çурçĕр çилĕ ытларах хуçаланать-ха кунта. Сивĕ юра çĕр çийĕнчен тасатмалла. Çитет, тек ӳсен-тăрана хупласа ан вырттăр. Шыв-шура та пăртан ирĕке кăлармалла. Йывăçсем те тахçанаха çуркуннехи ăшша кĕтеççĕ. Вĕсен те папка çурса симĕс çулçисемпе тавралăха илемлетмелле. Çапла, пур çĕре те ĕлкĕрес пулать çуркуннен. Васкать вăл, питĕ васкать. Вăхăт кĕтмест.

– Ырă, çутă Çуркунне! Ыран Автатти кунĕ. Манман-и эсĕ?

– Манман-и?.. Манман-и? – асăрхаттараççĕ ăна пурте: çынсем те, кайăк-кĕшĕк те, йывăç-курăк та. Çук, асрах тытать-ха Ăшă Çур Автатти кунне.

– Хаяр кăçалхи Сивĕ Мучи. Вăйĕ те сахал мар унăн. Çирĕп тăр, ан парăн, – астутарчĕç ăна вăрманти тискер кайăксем те.

– Эпĕ те пĕччен мар. Ман енче асамлă хĕвел. Авă ăшă çил те вĕçсе килчĕ, – лăплантарчĕ тавралăха Çуркунне. – Эсир те мана юрататăр, чĕнетĕр, кĕтетĕр. Çав юрату та мана кĕрешӳре вăй парать.

Акă пăрланнă çĕр хыçĕнчен хĕвел çаври кармашса пăхрĕ, “Мĕнле эсир унта? Шăнса вилмерĕр-и?” – ыйтрĕ вăл çутă пайăркисене йĕри-тавра сапаласа ярса.

– Çук, вилмен! Кĕтетпĕр сана. Хăвăртрах çĕклен, – илтĕнчĕ çĕр çинчен.

– Эй, Çуркунне! Автатти кунĕ пуçланчĕ. Атя, тух кĕрешĕве! – каллех шарт çапрĕ туйипе Сивĕ Мучи.

– Халех! – янрарĕ уçă сасă. – Хĕвел! Васка хăпарма. Паян пирĕн çĕр çинче автан ĕçмелĕх шыв кăтартас пулать.

– Илтрĕм. Ăнлантăм, – терĕ те Хĕвел сивĕпе шăнса шуралнă тӳпенелле улăхма тытăнчĕ. Ăшă пайăркасем аялалла васкаса чупрĕç. Анчах çитеймерĕç вĕсем çĕр çине. Сыхă тăракан Сивĕ Мучи çарĕ çавăнтах мĕнпур ăшша çавăрса илчĕ. Çакна курса хĕвел тата та çӳлерех çĕкленчĕ. Ылтăн пайăркасем ăшăнсах, йышлансах пыраççĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр, çĕршерĕн-пиншерĕн çула картласа тăракан сивĕ вăй çине вирхĕнеççĕ.

Çапла кăнтăрла иртрĕ. Юлашкинчен, хаяр çар сайралма пуçларĕ. Çук, тек вăй çитереймест вăл ăшă пайăркасене тытса чарма. Акă вĕсем çĕр çине персе çитрĕç. Çуркунне вĕсене хапăл тусах кĕтсе илчĕ. Мăнкăмăллăн йăлтăртатса выртакан çĕнĕ юр

çине сапаларĕ, шăннă сывлăша, йывăççене пачĕ. Ĕнтĕ выльăхчĕрлĕх тĕттĕм витерен хĕвел питтине  туха-туха тăчĕ, кайăккĕшĕк, турат çинчен турат çине вĕçе-вĕçе, хаваслăн чĕвĕлтетме тытăнчĕ. Чӳрече кантăкĕсем çинчи шурă ӳкерчĕксем çухалчĕç. Сивĕ Мучи вара, вăйсăрланнă çарне пухса, çурçĕрелле чакма пуçларĕ. Шăнса пăрланнă юр та кăпăшкаланса хавшасах пычĕ, юлашкинчен тӳсеймерĕ, – йĕрсе ячĕ. Вара çуртсем çинчен сивĕ çутă тумламсем юха-юхма анчĕç, хĕвел çинче шыв кӳлленчĕкĕсем йăлтăртатса тытăнчĕç. Сивĕ Мучи каллех хăйĕн пăр керменне тарса пытанчĕ.

Çутă Çуркунне ăшшине тараватлăн салатрĕ – кама кирлĕ илĕр, савăнăр!

Ăна саламлама çынсем те урама тухрĕç.

– И-и, автан ĕçмеллĕх çеç мар, вăкăр ĕçмелĕх те шыв пур паян, – хаваслăн калаçса илчĕç вĕсем.

Анчах яланах çапла пулмасть çав. Тепĕр чух Автатти кунĕ сивĕ хуçаланать. Пĕр тумлам шыва та кураймастăн ун пек чух пуш уйăхĕн вун тăваттăмĕнче тулта. Савăннă Сивĕ Мучи çавăн пек çул Çурçĕре кайса пытаннинчен хăйĕн çарне çуркуннехи, çуллахи кунсем çийĕн салатать тет. Çӳреççĕ тет вара сивĕ ачисем ăшă çанталăка пăсса. Хĕвел хĕртсе пăхать пулин те, е сивĕ çил вăркăшса вĕрет, е сивĕ çумăр çуса каять. Ӳссе савăнтараймасть вара пахча çимĕç çынсене. Хăяр çук, вăл çитĕнеймесĕрех кукăрăлса саралса ларать, помидор хуралса çĕрме тытăнать.

Çапла, çулла пахча çимĕç ăнасси Автатти кунĕ ăшă  е сивĕ пулнинчен килет теççĕ. Тен, ĕненместĕр эсир çавна? Апла пулсан хăвăр сăнаса пăхăр.

# ÇĔНĔ ÇУЛ КАÇĔ

Сĕм вăрманта, пысăк çавра уçланкă çывăхĕнче ӳсекен йывăççем хушшинче пĕр хĕллехи ир çакăн пек калаçу пуçланнă:

– Кĕçех Çĕнĕ çул çитет. Уяв  йĕркелесчĕ, – тенĕ çамрăк Вĕрене юнашар ларакан йăрăс Хурăна.

– Эпĕ те çавăн çинчен шухăшлатăп, – хуравланă лешĕ. – Ах, уяв! Илемлĕ юрă, вăйă-кулă. Мĕн тери лайăх! Çапах пурте пирĕнтен килмест-çке. Чăрăшсем мĕн тейĕç-ши?.. Малтан

çавсемпе калаçса пăхас пулать.

– Уявне хаваслансах йĕркелĕттĕмĕр-ха, – сăмах хушнă чăрăшсенчен пĕри. – Анчах тăхăнма çĕнĕ тум кирлĕ-çке. Унсăрăн Хĕл Мучи кăмăлсăрланма пултарать. Эй, сивĕ çил! Çитет сана усăсăр вăркăшса çӳреме. Вĕç-ха малалла, кала юр пĕлĕчĕсене, килччĕр, пулăшччăр пире.

– Юрĕ, – тенĕ те сивĕ çил, çурçĕр еннелле вĕçсе кайнă.

Чăнах та, вăхăт нумай та иртмен, кăвак тӳпене тĕксĕм йывăр пĕлĕтсем хупăрласа илнĕ. Сывлăшра темĕн чухлĕ шурă юр пĕрчи вĕлтĕртетме пуçланă. Симĕс тумлă лапсăркка хырсемпе чăрăшсене шап-шурă пĕркенчĕкпе вите-вите хунă.

– Пирĕн туратсем яка, вĕсем çинче юр пĕрчисем тытăнса тăраймаççĕ. Сивĕ хĕл, тархасшăн пулăш. Пирĕн те Çĕнĕ çула илемлĕ тупма кĕтсе илес килет, – тенĕ ытти йывăçсем.

– Юрĕ, юрĕ. Тăхтăр кăштах, – лăплантарнă вĕсене хĕл.

Каç пулсан тавралăха çăра тĕтре карса илнĕ. Ир енне çанталăк уяртнă, сивĕтнĕ. Хĕвел куçне уçса çĕр çийĕн çĕкленнĕ çеç – эй, тĕлĕнтермĕш! – хура вăрман шап-шурă çĕнĕ тумĕпе киленсе, хуллен хумханса ларнине курнă.

– Эй, тавралăх! Манран та парне туян, – тенĕ те Хĕвел çутă пайăркисене çĕр çийĕн сапаласа янă.

– Ах, мĕн тери чипер эпир, – пăшăлтатнă йывăçсем. – Мĕн тери чипер.

– Çапла, кĕçĕр Çĕнĕ çул çуралать. Хăвăртрах хатĕрленес пулать, – шавланă йывăçсем. – Чăрăшсем, сирĕнтен хăшĕ елка пулас тет?

– Эпир чи илемлине суйларăмăр. Акă вăл, – кăтартнă лешсем ушкăнра тăракан лапсăркка туратлă йăрăс чăрăш çине.

– Хăвăртрах капăрлатас пулать. Елкăшăн шап-шурă тум çителĕксĕр. Ăçтан тупас тетĕр-ха хитре теттесем? Э? – вĕçĕмсĕр чакăлтатма тытăннă чакак вăрăм хӳрине йкăл-якăл вылятса.

– Ман темиçе сапака юлнă туратсем çинче. Татса çакăр, – сĕннĕ Пилеш.

– Эпĕ те çырласене паратăп, – тенĕ Палан.

– Манăн та йĕкелсем пур... Пурне те илĕр...

– Чакак, ăçта çак сан йăву? Унта темĕн чухлĕ йăлтăркка япала пур теççĕ, – хутшăннă калаçăва тин кăна вĕçсе пынă Улатакка.

– Мĕн?! – ялтах сикнĕ çакна кĕтмен чакăлти. – Çапла, пур ман пуянлăх. Эпĕ сирĕн пек ним çук кайăк мар. Тĕкĕр катăкĕ

те пур, çутă кашăк аври те, йăлтăркка тӳме те... Анчах эпĕ ăна хам валли пухнă. Памастăп. Никама та памастăп!

– Юрĕ-çке, юрĕ. Лăплан. Никам та вăйпа туртса илмест сан пурлăхна. Унсăрăнах, пăх-ха, епле капăр халĕ пирĕн елка. Хитре кайăксене чĕнетпĕр. Вĕсем ларсан тата та чиперленет.

Çапла хĕллехи кун вĕçленсе пынă. Хĕвел юлашки хĕрлĕ пайăркисене пуçтарса илнĕ те тĕксĕм çĕр хыçне канма анса кайнă. Тĕттĕмленме пуçланă.

– Епле-ха çутăсăр? Унсăр мĕнле уяв пултăр? Капла пирĕн тум та йăлтртатмасть, – пăлханма тытăннă йывăççем.

– Эпĕ çутă мар-и вара? – кармашса пăхнă тулли Уйăх. Çĕкленнĕ те кĕмĕл çутине вăрман çийĕн салатнă.

– Ах, уйăх, çăлтăрсем!.. Ку пушшех лайăх, пушшех интереслĕ, – пăшăлтатса илнĕ çамрăк Вĕренепе йăрăс Хурăн.

Ĕнтĕ хăнасем пуçтарăнма пуçланă. Чи малтан чакак персе çитнĕ.

– Килеççĕ, килеççĕ, – хашка-хашка чакăлтатма тытăннă вăл. – Мĕнпур вăрмана вĕçсе çаврăнтăм. Пурне те систертĕм. Пурте пĕлеççĕ халĕ уяв пуласса. И-и, ара... Эпĕ пулмасан, кам пулăшатчĕ-ши сире...

Чакак хыççăн ытти кайăксем те вĕçсе килнĕ. Хура-шурă-сарă тумлă кăсăясене, хĕрлĕ пĕсехеллĕ уйăпа, тем тĕслĕ хитре тĕклĕ, капăр шăкăлчипе, пĕчĕк чĕпписене хĕллехи сивĕре кăларма хăраман, йăмăх кĕлетке-çурăмлă, кукăр сăмсана тӳрех елка çине ларма сĕннĕ. Вĕсем хыççăн тĕрлĕ тискер кайăк çурисем те чупса çитнĕ. Икĕ пĕчĕк упа, пурăш, пăши пăрушĕ, кашкăр, мулкач, тилĕ. Малтан вĕсем уçланка тухма вăтанса, пĕр-пĕрне тĕрткелесе тăнă, каярахпа хăюлланнă. Пуçланнă вара хаваслă уяв каçĕ. Кайăксем илемлĕ юрă янăратнă, чакак балалайка каланă, хĕрлĕ тӳпетейлĕ улатакка параппан çапнă. Тăватă уралла çăмламас пĕчĕк хăнасем те кашни хăй пултарулăхне кăтартма тытăннă: кайри урисем çине çĕкленсе ташланă, пуç хĕрлĕ тăрса утнă, сикнĕ, чăкăл-макăл йăваланнă.

Акă вăрманта унта та кунта шарт та шарт туни илтĕнсе кайнă. Кăна йывăççем хыпар янă: Çĕнĕ Çул çуралнă! Вăл кунталла килет! Кĕçех шап-шурă вăрăм сухаллă, йăлтрκка кăвак кĕрĕклĕ Хĕл Мучи курăннă.

– Çĕнĕ Çул ячĕпе саламлатăп! – тенĕ вăл уçланкă варрине тухса.

– Çĕнĕ Çул ячĕпе! Çĕнĕ Çул килчĕ! – савăннă пурте.

Хаваслӑ кӗвӗ янӑрать, Хӗл Мучи те чӑтайман, ыттисемпе пӗрле ташша яра панӑ. Ҫапла чунттан хаваслӑннӑ вӑхӑтра сисмен те – выҫӑ кашкӑр сикнӗ тухнӑ. Ҫивӗч шӑлӗсене шач тутарнӑ та ҫӑткӑн куҫӗпе йӗри-тавра пӑхса илнӗ. Шавлӑ уҫланкӑ самантрах шӑпланнӑ. Сехри хӑпнӑ кайӑк-кӗшӗк ҫӳлерех туратсем ҫине вӗҫе-вӗҫе ларнӑ. Тискер кайӑк ҫурисем, ҫӑлӑнӑҫ шыраса, Хӗл Мучи патне ыткӑннӑ. Шурӑ турачӗсене унталла-кунталла сулкаласа савӑнакан йывӑҫсем те пӗр вырӑнта хытса тӑнӑ... Мӗн пулӗ ӗнтӗ? Эй, мӗн пулӗ?

– Ан хӑрӑр! – илтӗннӗ кӗтмен ҫӗртен хаваслӑ сасӑ. Кӑвак кашкӑр тирӗ шуса аннӑ та, ун ӑшӗнчен, ахӑлтатса-кулса, шурӑ мулкач сикнӗ-тухнӑ. Вӑт мыскараҫӑ! Вара ытти ҫӑмламас хӑнасем те кула-кулах ҫири тирӗсене хыва-хыва пӑрахма тытӑннӑ. Кашкӑр ҫури – тилӗ, упа – чӗрӗп пулса тӑнӑ, пурӑш тилӗ тирне тӑхӑннӑ иккен.

Унтан Хӗл Мучи кӗсйинчен шап-шурӑ пӗчӗк тутӑр кӑларнӑ та ӑна силлесе кӑпӑшка юр ҫине саркаласа хунӑ.

– Асамлӑ ҫи витти! Пурин валли те тутлӑ кучченеҫ кӑларса хур! – тенӗ вӑл хыттӑн. Каланӑ кӑна – темӗн тӗрлӗ апат-ҫимӗҫ тухса выртнӑ.

– Илӗр! Ан вӑтанӑр! Кама мӗн килӗшет, – тенӗ каллех тарават Хӗл Мучи.

Хӑнасен йышӗ ӳссех пынӑ пулин те, тутлӑ ҫимӗҫ иксӗлмен...

Ир енне тин хӑнасем килӗсене саланма пуҫланӑ. Халь кӑна вӑраннӑ ҫиле ҫеҫ уяв вӗҫленни килӗшмен. Пушанса юлнӑ уҫланка вирхӗнсе кӗрсе, вӑл хӑйӗн ӗмӗрхи юррине тӑсса янӑ, шӑхӑрнӑ, ташланӑ. Ӑна итлесе йывӑҫсем те унталла-кунталла сулкаланнӑ. Вӗсен шап-шурӑ уяв тумӗ, уйӑх ҫутинче кӑваккӑн йӑлтӑртатса пӗчӗк юр пӗрчисем пулса саланнӑ, сывлӑшра ҫаврӑна-ҫаврӑна вӗҫнӗ.

# ХАСТАР МӐРЛУШ

Пурӑнать, тет, пӗр килте кушак ҫури. Хӗрлӗ тӗслӗ ҫӑмламас тумӗ хӗвел ҫинче кӑвар пек йӑлкӑшать, ҫилпе вӗл-вӗл тӑвать. Ҫивӗч, ҫӑмӑл кушак. Выляс тесен каҫсах каять, шӑшисене кунӗн-ҫӗрӗн хӑвалать. Чупса ывӑнсан, арча ҫине сиксе хӑпарса, сехечӗ-сехечӗпе ҫывӑрать.

Ӑшӗнче унӑн пӗчӗк ҫеҫ мотор пур тейӗн, ҫурӑмӗнчен

ачашласанах мăрр-мăрр тума тытăнать.

– Ах, Мăрлуш! Чипер пĕчĕк Мăрлуш! – тет пĕррехинче хĕрача, тăвată уралла тусне ачашласа.

Çавăнтан пуçласа кушак çурине пурте Мăрлуш тесе чĕнме тытăнаççĕ.

Пĕррехинче Мăрлуш, шăши тытаймăп-ши тесе, тĕттĕм кĕлете йăпшăнса кĕрет. Пăхать: урайĕнче халиччен курман темĕнле чĕр чун чупкаласа çӳрет. Урисем кĕске, хӳри вăрăм. Куçĕ сăхă, тем шыраса, вĕçĕм унталла-кунталла пăхкалать. сывлăш çавăрса пăшăлтатрĕ шăши. – Хуçа хĕрĕн юратнă пуканине Йĕкерук хăй шăтăкĕнче тарçăра усрать... Курсан, шелленипе кăшт çеç йĕрсе ямарăм. Тумĕ çĕтĕк-çатăк. Кунĕн-çĕрĕн йывăр ĕçпе асаплантарать, тулли михĕсем, пысăк карçинккасем çĕклет, тем тĕрлĕ апат-çимĕç чыхса тултарнă пӳлмесене тасатса уçăлтарать, нумай пӳлĕмлĕ пӳ рте тирпейлет. Пĕчĕк йĕкехӳресене те вăлах пăхать. Чăркăш Йĕкерук вĕçĕмсĕр хирĕлет, ялан мĕнле те пулин кăлтăк тупса кӳрентерме тăрăшать. Хĕнеççĕ ăна, мĕскĕне... Çурисем те амăшĕнчен юлмаççĕ. Çивĕч чĕрнисемпе çара уринчен, аллинчен чĕрмелеççĕ, шĕвĕр шăлĕсемпе çыртаççĕ.

– Ара, Люлю вĕт ку! – тавçăрса илчĕ Мăрлуш, пукане çинчен асăнсанах. – Эпир ăна кунĕн-çĕрĕн шыр атпăр. Авă ăçта иккен вăл. Ай-ай-яй!

Ирĕке янă шăши шăтăка тарса кĕрсен, кушак çури тарăн шухăша кайрĕ: “Пуканене çăлас пулать. Анчах мĕнле? Йĕкерук вăйлă. Вăл йытти хирĕç сикме хăр амасть. Эпĕ вара пĕчĕк кушак çури çеç”.

Мăрлуш чи малтан йĕкехӳре çул-йĕрне лайăххах тĕрĕслеме шут тытрĕ. Мĕн чухлĕ шăтăк! Анчах вăрă-хурах ытларах пĕринпе кăна усă курать. Пахчара, сарай хыçĕнче, пысăк пĕрене выртать. Ун çумĕнче çăра вăрăм курăк ӳсет. Йĕкехӳре çав пĕрене айĕнчи çулпа час-часах тухса çӳрет.

– Юрĕ, – кăмăллăн мăрăлтатрĕ кушак çури, лутра сарай тăррине улăхса. – Кунта эпир сăнав пункчĕ тăвăпăр.

Çав вăхăтрах пĕрене айĕнчи шăтă кран чăнах та çăткăн хурах тухса кайрĕ.

Мăрлуш, сарай çинчен сиксе анса, картишĕнче темĕн шырама тытăнчĕ. Кĕçех вăл çинçе пăралук тупрĕ те унăн вĕçне йĕкехӳре шăтăкĕ çывăхĕнче чавса пытарчĕ, теприне каллех сарай çине

улăхса хăй ларнă вырăна çирĕплетсе хучĕ. Унтан кил хуçи хĕрарăмĕнчен какай татăкĕ ыйтса илсе, ăна шăтăк çывăхне пырса хучĕ, вара хăй татах сарай çине улăхса вырнаçрĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ – шăтăкран пĕчĕк йĕкехӳре курăнчĕ. Ку Йĕкерук ачи ĕнтĕ. Нăш-нăш! шăршларĕ вăл. Какай шăршине сиссе, çамрăк хурахăн вăрăм уссийĕ чĕтренсе илчĕ. Хăрушлăх çинчен шухăшламасăр, Йĕкерук ачи тӳрех аш татăкне илме тăчĕ. Çакна кĕтнĕ Мăрлуш ун çине ялт сикрĕ. Йĕкехӳре куç хупма та ĕлкĕреймерĕ, кушакăн вирлĕ чĕрнисем хушшине çакланчĕ. Ыратнипе, хăранипе вăл çухăрса ячĕ. Мăрлуш сарай çинне сиксе те хăпарчĕ. Ак хайхи Йĕкерук хашкаса чупса çитрĕ. Ывăлĕ кушак чĕрнийĕсем хушшинче тапăлтатнине курсан, унăн пĕтĕм кĕлетки-çурăмĕ чĕтрес е кайрĕ, пĕр хушă вăл сывлайми пулчĕ.

– Халех янă пултăр! – хăрăлтатрĕ Йĕкерук хаяррăн. Çивĕч чĕрнисемпе пĕренесенчен çаклатса вăл сарай çине улăхма тăчĕ.

– Эй, кĕске ура! Ăçта тапăлтататăн? – тăрăхларĕ Мăрлуш, Йĕкерук çине çӳлтен аялалла пăхса. – Ăсу пулсан, ан каялла. Итле эпĕ каланине.

Мĕн тăвăн? Йĕкехӳре аялалла лӳпперрĕн сикрĕ.

– Эсĕ ман юратнă тусăн пуканине вăрласа кайнă, ăна тарçăра асаплантарса усратăн. Ачуна çăлас тетĕн пулсан, халех тавăрса пар.

– Пустуй сăмах. Нимĕнле пукане те çук ман патăмра, – пӳлчĕ ăна Йĕкерук сиввĕн.

Мăрлуш чĕнмерĕ, çивĕч чĕрнисене кăна кăштах пăчăртарĕ. Пĕчĕк йĕкехӳре каллех турткалашма, çухăрашма тытăнчĕ.

– Юрĕ... Килĕшетĕп, – терĕ Йĕкерук, çури çуйăхнине тек тӳсеймесĕр. – Анчах асту, усал кушак çури, улталама ан шутла...

– Ман сăмах çирĕп, – терĕ Мăрлуш мăнаçлăн.

Йĕкерук тĕттĕм шăтăка чăмрĕ те кĕçех пуканене илсе тухрĕ.

Мăнтарăн Люлю! Епле улшăнса кайнă вăл! Кăпăш çӳçĕ тирпейсĕррĕн сапаланнă, халĕ кăна çурăлакан чечек евĕр илемлĕ сăнĕ шурăхса тĕксĕмленнĕ, алли-ури çинче темĕн чухлĕ суран.

Çакна курсан, Мăрлуш куçĕсем хаяррăн ялкăшрĕç.

– Мĕншĕн сĕтĕк-сатăк тум ун çийĕнче? – хăйăлтатрĕ вăл, усал пусмăрçă çине кĕç-вĕç сиксе ларас пек пăхса. – Халех унăн



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-40616

илемлĕ тумне тупса пар.

Йĕкерук каллех шăтăка кĕрсе çухалчĕ те ним чĕнмесĕр пуканен пурçăн кĕпине курăк çине илсе тухса хучĕ.

– Пар ывăлăма, мĕн тытса тăратăн тата? Яр!

– Халех, – терĕ Мăрлуш юриех васкамасăр. – Тӳсĕмлĕрех пул. Манăн каламалли татах пур... Пăх-ха, куратăн-и çак пралука? Ăçта пулĕ тетĕн эсĕ унăн тепĕр вĕçĕ? Шăп сан йăву айĕнче. Кăшт çеç туртас пулать... Чухлатăн-и вара мĕн пуласса?.. А-а, пĕлетĕн апла. Кунти вырăнсенчен тухса тасалма сана çур сехет паратăп. Итлемесен, йăву та, ачу-пăчу та пĕтĕмпех татăкăн-татăкăн сирпĕнсе арканаççĕ... Анчах асту, Йĕкерук, çыртса татма ан шутла... Асăрхаттаратăп.

Çапла каларĕ те Мăрлуш йĕкехӳре çурине чĕрне хушшинчен кăларчĕ. Лешĕ сарай хĕррине чупса пырса тӳрех амăшĕн ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Йĕкерук ăна пĕр-икĕ хут çатлаттарса илчĕ те хăвăртрах шăтăкне тĕртсе кĕртсе ячĕ.

– Асту, Мăрлуш, – юнарĕ вăл, çивĕч шăлĕсене усаллăн йĕрсе. – Кăтартăп-ха эпĕ сана. – Вăл вăртах пăрăнчĕ те симĕс курăк ăшĕнче çухалчĕ...

Тавралăх шăплансан, Шăшикке хăйĕн шăтăкĕнчен йăпăртатса тухрĕ.

– Хе-хе, – хаваслăн сиккелерĕ вăл. – Вăт телей! Эсĕ кунтан кайсан, и-и-и, мĕн чухлĕ пурлăх юлать... Çулу çăмăл пултăр, кӳршĕм... Ха, – терĕ вăл тепĕр самантран ĕнсине хыçкаласа. – Эпĕ, пĕчĕк шăши, Мăрлуш тусĕн юратнă пуканине асапран çăлтăм-çке. Çавăнпа вĕсен мана ĕмĕр тăршшĕпе тав туса пурăнмалла. Ăçта кайса çухалчĕ çав кушак çури? Калаçас пулать манăн унпа. Тек нихçан  та тивместĕп тесе хут çырса патăр. Мана та, ачасене те... Унсăрăн... – Шăшикке хăй патне йăпшăнса пыракан кушак çурине асăрхарĕ те вĕлт кăна тарса пытанчĕ.

Чăнах та, çав кунтан пуçласа йĕкехӳре ашкăнма пăрахрĕ. Инçете тарчĕ пулас – тек ун çинчен сас-хура илтĕнмерĕ.

Хĕрача пукане тупăннăшăн питĕ савăнчĕ. Ăна шыва кĕртсе таса тум тăхăнтартрĕ, суранĕсене эмеллесе таса вырăн çине вырттарчĕ.

– Çывăр. Хăвăртрах сывал, – пăшăлтатрĕ вăл. – Тек эпĕ сана нихăçан та çапла пĕччен пăрахса хăвармăп... Мăрлуш тусăм! – кушака урайĕнчен çĕклесе çупăрларĕ хĕрача. – Эсĕ мана нимĕн те пĕлмест тетĕн пулĕ-ха. Эпĕ пĕтĕмпех пĕлетĕп. Мана Люлю

каласа пачĕ. Эсĕ питĕ ăслă, питĕ ырă кушак çури. Тавтапуç сана пуканене çăлнăшăн.

– Мăрр! Мăрр! – терĕ Мăрлуш ачашланса. – Мĕн калаçмалли пур ун çинчен. Туссене пулăшма эпĕ яланах хатĕр.

* * *

Усал Йĕкерука хуса янăранпа çулталăк çитрĕ. Çак вăхăтра пĕчĕк Мăрлуш ӳссе тĕрекленчĕ, çитĕннĕ кушаксен шутне кĕчĕ. Унччснхи пекех вăл çивĕч, çăмăл, халĕ те кил хуçи хĕрачипе туслă. Кĕçех тахçан йăва çавăрнă кил-çуртран Шăшиккен те тухса тарма лекрĕ.

– Пурăнма май çукчĕ. Чӳречерен пуçа кăларса пăхма хăракан пултăм. Пур çĕрте те Мăрлуша куратăм, – каласа парать, тет, шăши кӳршисене çĕнĕ вырăнта.

Анчах кил-çурта харам пырсенчен тасатрĕ пулин те, Мăрлуш лăпланса лармасть, кăнтăрла та, çĕрле те тимлĕ вăл.

Нумай пулмасть кăнтăрлахи апат хыççăн Мăрлуш картишне тухрĕ. Ампар айне, мĕнпур çурт-йĕре кĕре-кĕре тĕрĕслерĕ те кăшт канма тесе хĕвел ăшшине выртрĕ. Çуллахи кун янкăр уяр, ăшă. Çывăхрах чăхсем какалаç çĕ. Автанĕ те инçе мар, тислĕк купи патĕнче тем шырать. Кунтах чăх чĕпписем шиплетсе чупкалаççĕ. Амăшĕ те çывăхрах ачашшăн кăлăклатса çӳрет, айван ачисене пурнăç йĕркине вĕрентет.

Хĕвел çутинчен куçне хĕссе, Мăрлуш кăн-кăвак тӳпенелле пăхса илчĕ. Çӳлте, пуç çийĕнче, çуначĕсене икĕ енне сарса, хурчка васкамасăр ярăнса вĕçет. Картишĕнче мĕн пуррине çивĕч куçĕпе сăнать.

“Епле илемлĕн вĕçет, – шухăшларĕ Мăрлуш. – Хам ĕмĕрте пĕрре те пулин çавăн пек çӳле çĕкленсе курасчĕ. Шел, çунатăм çук”.

Çапла шухăшларĕ те тепĕр аякĕ çине çаврăнса выртса куçне хупрĕ. Кăтăш пулнăччĕ кăна, сасартăк чăхсем шуйханса кăтиклетни хăлхана пырса кĕчĕ. Çавăнтах тахăшĕ çухăрса ячĕ:

– Хурах! Пулăшăр! Пулăшăр!

Мăрлуш сиксе тăчĕ. Мĕн пулнă? Кама пулăшмалла? Пăхать – картишĕнче чăхсем те, автан та çук. Халĕ кăна чĕпсем чупкаласа çӳренĕ вырăнта пысăк кайăк çапкалашать. Ун умĕнче чĕп амăшĕ тапăлтатать. Çуначĕсене сарнă, тĕкне тăратнă, куçĕ хĕрелсе кайнă, сиксе тухас пек хăрушшăн ялкăшать.

– Хурах! Пулăшăр! Пул ăшăр! – вĕçĕмсĕр çухăрать чăх вăйлă

тăшманне хирĕç сиксе.

Хастар чĕреллĕ Мăрлуш çакна тек лăпккăн пăхса тăма пултараймарĕ. Чăх-чĕппе сыхласси, паллах, кушак ĕçĕ мар. Çапах тăван картишĕнче темиçе утăмра усал хурах пуçтахланнине епле чăтăн? Айăпсăр чĕпсене те шел. Авă епле хăраса ӳкнĕ вĕсем, мĕскĕнсем...

Мăрлуш куçĕсем йăлкăшса илчĕç. "Ах, путсĕр! Вăт çăткăн!" – шухăшларĕ кушак. Урисене пĕр çĕре пуçтарса, хăлхине хĕстерсе, вăл çĕр çумне лăпчăнчĕ.

Хурчка, чăхха вăйлă кăкăрĕпе тĕрте-тĕрте ярса, чĕп патне ыткăннăччĕ кăна, шăп çав вăхăтра х-х-х! тесе Мăрлуш кайăк çурăмĕ çине сикрĕ.

Çакна кĕтмен хурчка каялла талпăнчĕ, ыратнине тӳсеймесĕр, темиçе хутчен туртăнкаласа сиккелесе илчĕ. Çапах сăхас шутпа кукăр сăмсине кушак енне пăрчĕ. Мăрлуш хăйне кӳрентерме памарĕ, малти урине вĕçертрĕ те хурчкана пуçĕнчен ыратмаллах чавса илчĕ. Çăлăнма хăтланса , кайăк çуначĕсене сулкалама тытăнчĕ те сывлăшалла çĕкленчĕ.

"Ай, эпĕ те вĕçетĕп!" – шухăшласа илчĕ Мăрлуш чылаях хăраса.

Чи малтан вĕсене урамра вылякан ачасем асăрхарĕç.

– Пăхăр-ха, пăхăр! Хурчка кушака çуначĕ çине лартса таçта илсе каять! – тĕлĕнче кăшкăрчĕ пĕри.

– Ай-уй! Чăннах та! – сасă пачĕç çитĕннĕ çынсем те.

– Мăрлуш вĕт ку! Мăрлуш! Мăрлуш! – кăшкăрчĕ пĕчĕк тусĕшĕн хăраса ӳкнĕ хĕрача.

Анчах кушак ăна илтмерĕ, кайăк ӳт-тирĕнчен тата çирĕпрех тытрĕ çеç. Çăткăн кайăк кушака çурăмĕ çине лартса ярăнтарнине кĕçех пĕтĕм ял хаваслăн сăнаса пăхса тăчĕ.

Хурчка тек тӳсеймерĕ, ял хыçĕнчи çырма урлă аран-аран вĕçсе каçрĕ те сухаланă çĕр çине анса ларчĕ.

Калама çук хăрана Мăрлуш пĕр самант та тăхтамарĕ, чĕрнине вĕçертрĕ те, хăйне такам ывăтса янă пек, тарăн çырма тĕпнелле вирхĕнчĕ.

"Вĕçсе куртăм! – савăнса шухăшларĕ вăл, хăрани иртсе кайсан. – Çӳлтен аялалла пăхма хăрушăрах та, анчах пурпĕр лайăх. Мĕнпур яла тĕлĕнтертĕм. Пирĕн картишне урăх анмĕ ку хурчка".

Лапсăркка хĕрлĕ тумне шăлса якатнă хыççăн Мăрлуш

васкамасăр килнелле утрĕ.

Паттăр кушака картишĕнче хапăл тусах кĕтсе илчĕç. Хурчкаран ампар айне кĕрс е тарнă кĕрнеклĕ автан, хĕрлĕ киккирикне айăплăн силлесе, Мăрлуш умĕнче хăюсăррăн пуçне тайрĕ те тулă пĕрчи пырса хучĕ. Анчах хастар кушак хăравçă çине çаврăнса та пăхмарĕ, кăпăшка илемлĕ хӳрине мăнаçлăн çĕклесе иртсе кайрĕ.

Чĕп амăшĕ Мăрлуша хаваслăн кăлăклатса тав турĕ. Пĕчĕк чĕпсем хăйсене вилĕмрен хăтарнă хастар кушак умĕнче, салтаксем пек, пуçĕсене маттуррăн çĕклесе, урисене çирĕппĕн пусса ута-ута иртрĕç.

– Мăрлуш! Мăрлуш таврăнчĕ! – илтĕнчĕ çав самантрах хаваслă сасă. Картишне чупса кĕнĕ хĕрача кушака йăтса илсе хăй çумне çупăрларĕ.

– Кала-ха, тархасшăн, мĕнле хăрамарăн эсĕ çавăн пек çăткăн, вăйлă кайăк çине утланса ларма? – ыйтрĕ вăл.

– Мăрр, мăрр, – терĕ лешĕ ачашланса, – пĕчĕк чĕпсене хӳтĕлерĕм... Тата вĕçсе курас килчĕ...

# КАМ ЭСĔ?

Мăр-Мăр ятлă кушак пысăк, çӳллĕ çуртра, ăшă, çутă хваттерте пурăнать, тутлă çиет, çемçе вырăн çинче çывăрать. Пурнăç лайăх. Ирĕке тухса çӳреме май пулсан тата та лайăхрахчĕ те... Кичемрех çав. Кăлармаççĕ ăна хуçисем хваттертен, инкек-синкек пуласран шикленеççĕ. Çавăнпа Мăр-Мăр чӳрече янахĕ çине сиксе хăпарать те çутă кантăкран сехечĕ-сехечĕпе тулалла пăхса ларать.

Унта пачах урăхла пурнăç. Çынсем вĕçĕмсĕр каллĕ-маллĕ куçкалаççĕ, ача-пăча шавласа чупать, машинăсем кĕрлесе иртеççĕ. Кунтан, вун улттăмĕш хутран инçете тăсăлакан хула çурчĕсем те лайăх курăнаççĕ. Тĕрлĕ вĕсем: пĕрисем, юпа евĕр, çӳллĕ, ансăр, теприсем вăрăм, лутака. Пререллле уçă хир сарăлса выртатаь, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ ç ĕрте симĕс вăрман тăсăлать.

Акă хуçа хĕрарăмĕ ĕçрен килчĕ. Аллинчи сумкине урайне лашт пăрахрĕ те тепĕр пӳлĕм алăкĕ хыçĕнче çухалчĕ. Аякĕ çине йăваннă сумкăра вара пĕчĕк чĕрчун курăнчĕ. Малтан пуçне кăларчĕ, шиклĕ куçĕпе йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ, хăлхине

выляткаласа илчӗ, унтан урайне ялт сикрӗ. Хыҫалти урисем ҫине ҫӗкленсе малтисене кӑшт-кашт сӑтӑркаларӗ, тӗксӗм кӑвак кӗрӗкне якатрӗ, вӑрӑм хӳрине выляткаласа илчӗ.

Мӑр-Мӑр ун ҫине хускалмасӑр, шӑппӑн пӑхса ларчӗ.

– Эсӗ кам? – ыйтрӗ вӑл юлашкинчен, чӳрече янахӗ ҫинчен сиксе анса.

Ҫакна кӗтмен чӗрчун шартах сикрӗ.

– Эпӗ... Эпӗ...

Урӑх вӑл нимӗн те каламарӗ, мӗнпур кӗлеткипе чӗтресе Мӑр-Мӑр ҫине куҫне тӗллерӗ ҫеҫ. Ҫапла вӗсем кӗске вӑхӑт пӗр-пӗрин ҫине тинкерсе пӑхса ларчӗҫ.

– Ан хӑра, ан хӑра, – терӗ Мӑр-Мӑр.

Вӑл кӗтмен хӑна ҫывӑхнех куҫса ларчӗ те малти урипе ӑна пуҫӗнчен хуллен ачашласа илчӗ. – Атя туслашатпӑр. Эпӗ кушак Мӑр-Мӑр. Эсӗ кам?

– Эпӗ... Эпӗ, – терӗ каллех палламан чӗрчун, чӗтреме чарӑнмасӑр.

– Ай-у-уй! – илтӗнсе кайрӗ ҫав самантра тӗлӗннӗ сасӑ.

Пӳлӗме кӗнӗ хуҫа хӗрарӑмӗ куҫне чарса пӑрахса пӗчӗк чӗрчун ҫине тӗллерӗ.

– Ай-уй! Ӑҫтан, мӗнле майпа лекнӗ эсӗ кунта?

Йӑпӑр-япӑр хӳринчен ярса тытрӗ те урама тухмалли алӑк енне васкарӗ.

– Коля! Микула! Эсӗ цирк валли шӑши кирлӗ теместӗнччӗ-и? – илтрӗ Мӑр-Мӑр уҫӑ алӑкран. – Акӑ, ме!

“Шӑши теҫҫӗ апла ку чӗрчуна. Ха... шӑши, – шухӑшларӗ кушак, диван ҫине сиксе хӑпарса. – Тахҫан, такамран илтнӗ пек туйӑнать ҫак сӑмаха. Аннерен марччӗ-ши? Ҫук, Ас тумастӑп. Маннӑ”, – вӑл пуҫне, урисене пӗр вырӑна ҫавӑрса хучӗ те куҫне хупрӗ.

# АВТАНПА ТИЛӖ

ерма киртишӗнче темӗн чухлӗ чӑх-чӗп ҫӳрет. тул енче ҫӳллӗ карта хыҫӗнче сарӑ тилӗ йӑпшӑнса пырать. Шӗвӗр сӑмсине унта-кунта тӗрткелесе пӑхать, анчах ниҫта та кӗмелли ҫук.

Акӑ хӳме ҫине автан вӗҫсе ларчӗ, ҫуначӗсене ҫат-ҫат-ҫат! ҫапрӗ те янравлӑн юрласа ячӗ.

– Ки-ки-ре-к-у-у-у!

– Ах, автан тус, – йăпăртатса пычĕ ун патне тилĕ. – Сассу ытла та хăватлă санăн. Вăйлă пулас эсĕ. Ан кунта, пĕрле выльăпăр.

– Вăхăт çук манăн санпа выляма. Эпĕ Хураçкă тусăма чĕнетĕп. Вăл паян ирех вăрмана тилĕ тытма кайрĕ. Ки-ки-ре-ку-у-у! – калллех хыттăн янравлăн кăшкăрчĕ автанĕ. Çакна илтсен чее тилĕ вĕлт! çаврăнчĕ те тарăн çырма еннелле вĕçтере пачĕ.

# Тупмалли


| | |
|---|---|
| Кил хуралҫи | 3 |
| Пахчара | 3 |
| Кишĕр-мишĕр | 5 |
| Ҫăлтăмăр! | 6 |
| Атусьпа Маруҫ | 7 |
| Автатти кунĕ | 9 |
| Ҫĕнĕ ҫул каҫĕ | 12 |
| Хастар Мăрлуш | 15 |
| Кам эсĕ? | 21 |
| Автанпа Тилĕ | 22 |



Зоя Алексеевна Нестерова
Юмахсем

Редактор Э.И.Патмар
Набор, макет и оформление А.Г.Сидорова

Халăх ăс-хакăлĕ – Мудрость народная №2(21), 2006
Учредители: Эдисон Патмар, Николай Егоров

Журнал зарегистрирован в Госкомпечати ЧР, Рег. № Ч0279
Адрес редакции: 428010, Чебоксары, ул. Б. Хмельницкого, д. 76-9, тел. 35-07-34

Алҫырăвĕсене рецензилемеҫҫĕ, тавăрса памаҫҫĕ.

Объем 60х84, усл. печ. л. 1,5 Апрель, 2006г. Тираж 1000
Отпечатано в мини-типографии Шафровой Г.Г.
г.Чебоксары, ул.К.Маркса, 52-13

# Турӑ панӑ пилпе



Чӑваш ҫыравҫи Зоя НЕСТЕРОВА проза ӑсти пулнине пур вулакан та пӗлет пулӗ ӗнтӗ, анчах вӑл сӑвӑ та хайланине сахал кам пӗлет, мӗншӗн тесен пичетлемен вӗсене ҫыравҫӑ ниҫта та. «Чун уҫҫийӗсем вӗсем», – тесе калать Зоя Алексеевна хӑйӗн сӑввисем пирки. Юрӑ-сӑвӑ этемшӗн яланах самант чун уҫҫийӗ пулнӑ. Зоя Нестерован та кашни сӑвви – уйрӑм самант хавхаланӑвӗ. Вӗсене ҫыравҫӑ пӗр хӑйшӗн ҫеҫ хайлать тесе шутлать. Анчах вӗсемпе паллашсан ҫав шухӑшпа килӗшме ҫук. Вӗсенче пӗтӗм этемлӗх шухӑш-туйӑмӗсем те витӗмлӗ ӳкерӗннӗ. Сӑвӑҫ (прозаик ҫеҫ мар вӑл) хӑй каларӑшле, «Турӑ панӑ пилпе» хайланӑ ҫак тӑпӑл-тӑпӑл чипер сӑвӑсене, ҫавӑнпа вӗсем кашни вулаканӑн чунӗнче ӑшӑ та ырӑ кӑмӑл ҫуратассӑн туйӑнать.

Зоя Алексеевна НЕСТЕРОВА утас ҫулсене утса иртнӗ, ҫитес ҫула ҫывхарнӑ ҫыравҫӑ. Кӑҫалхи раштавӑн 24-мӗшӗнче унӑн пысӑк юбилейӗ. Вӑл Красноармейски районне кӗрекен Анат Кушар (Кушар Упи) ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Упири вӑтам шкулта вӗреннӗ хыҫҫӑн Шупашкарти педагогика институтне кайса кӗнӗ. Унтан вӗренсе тухсан Комсомольски районӗнчи Чурачӑк, Шупашкар районӗнчи Шемшер, Красноармейски районӗнчи Упи вӑтам шкулӗсенче вырӑс чӗлхипе литературине вӗрентнӗ. Унтан ҫирӗм ҫул патнелле Магадан облаҫӗнче ҫав предметпах учительте ӗҫленӗ. Халӗ Шупашкарта пурӑнать. Чӑваш Республики писателӗсен Союзӗн, РФ писательсен Союзӗн членӗ. Вӑл темиҫе кӗнеке авторӗ. Эппин, Турӑ панӑ пилӗпе татах та ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме ырлӑхпа сывлӑх та тумхахсӑр ҫул сунар ӑна.

*Чӑваш Республикин писателӗсен ячӗпе*
*Михаил СТ АВСКИЙ критик.*